ХЫПАР



● *Аталану çулĕпе*

# Евгений Яранский: "Мĕнле ĕçлетпĕр – çапла пурăнатпăр"



**Етĕрне районĕнчи ял хуçалăх предприятийĕсем Çĕр ĕçченĕн çулталăкĕнче тухăçлă тыр-пул, çĕр улми, хăмла пухса кĕртнĕ, выльăх-чĕрлĕхрен продукци илессине ÿстернĕ. Сăр тăрăхĕнчи çĕр ĕçченĕсем кăçал çур çĕр енчи районсен хушшинче малти вырăна тухнă. Пысăк наградăна ЧР Президенчĕ Н.Федоров ял хуçалăх ĕçченĕсен уявĕнче район пуçлăхне пачĕ. Етĕрнесен ĕç-хĕлĕпе район ертÿçи Е.М.Яранский паллаштарчĕ.**

– Çĕр ĕçченĕсем уйрăмах тăрăшуллă пулчĕç. Агропромышленноçра вăй хуракансем 9 уйăхра 1090 миллион тенкĕлĕх продукци туса илчĕç. Ял хуçалăх предприятийĕсем 12,5 пин гектар çинче тĕш тырă çитĕнтерчĕç. Вăтам тухăç – 24,2 центнер /иртнĕ çулхинчен 5,2 процент ытларах/. Уйрăм хуçалăхсен кăтартăвĕ самаях пысăк: "Ленинская искра" гектартан – 42,9, "Родина" 34,2 центнер тĕш тырă пухса кĕртрĕç. Районти хăмлаçăсем çулсерен республикăра туса илекен хăмлан 45 процентне хатĕрлеççĕ. Кăçал тухăç аван – 20,6 центнер. "Выльский" хуçалăхăн кăтартăвĕ 23,8 центнерпа танлашрĕ. Галина Гаврилова хăмлаçă гектартан 31,1 центнер илме пултарчĕ.

Юлашки çулсенче ял хуçалăх кооперативĕсемпе предприятийĕсен уй-хирĕнчи энерги ресурсĕсене перекетлекен хăватлă техника эффективлăха ÿстерчĕ. Финанс кризисĕн йывăрлăхĕ машина-трактор паркĕсене çĕнетессине чăрмантарчĕ пулин те кăçал 8 трактор, комбайн, ытти 18 техника хатĕрĕ туянтăмăр.

**– Çĕр ĕçченĕсен ÿсĕмĕ выльăх-чĕрлĕх отраслне аталантарма витĕм кÿни паллă.**

– Тĕрĕсех. Ĕнен сĕчĕ чĕлхи çинче вĕт. Паха апат мĕн чухлĕ ытларах янтăлатăн, çавăн чухлĕ ытларах продукци илетĕн. Выльăх-чĕрлĕхе хĕл каçарма хуçалăхсем утă-улăмпа пĕрлех силос тата сенаж палăртнинчен нумайрах /150 процент/ хывса хăварчĕç. Ку енĕпе "Заветы Ильича", "Чебаково", "Выльский" тата "Пучах" хуçалăхсем çаврăнăçуллă. Мăн Явăшсем, сăмахран, хĕл кунĕсенче районти хуçалăхсене силос сутаççĕ. Юлашки çулсенче выльăх-чĕрлĕх отраслĕпе тимлĕ ĕçлетпĕр. Республикăн пĕтĕмĕшле сĕт сăвăмĕнче пирĕн район тÿпи – 10 процент. Кăçалхи 9 уйăхра эпир 38904 тонна сĕт сунă. Ку иртнĕ çулхипе танлаштарсан – 107 процент. Кашни ĕнерен сĕт сăвасси те ÿсрĕ, 3476 литрпа танлашрĕ. "Родинăра" ку кăтарту – 5206 килограмм. Любовь Храмова çак тапхăрта 6794 килограмм сĕт сума пултарчĕ.

"АПК аталанăвĕ" наци проекчĕн витĕмĕ хушма хуçалăхра та выльăх-чĕрлĕх продукцийĕ ытларах туса илме май пачĕ. Вăл вăя кĕнĕренпе çăмăллăх кредитпа 1957 хуçалăх усă курчĕ. Уйрăмах Хула Выççăлкинчи /Стрелецкинчи/ Павловсем, Кивĕ Тинкеш ял тăрăхĕнчи Александр Иванов, Кăкшăм тăрăхĕнчи Александр Филиппов тата ыттисем пуçарулăх кăтартаççĕ. Сăмахран, Павловсем кунсерен 200 килограмм ытла сĕт сăваççĕ. Хресчене ял хуçалăх продукчĕсене вырнаçтарма "Забота", "Рябинка", "Вперед" тата "Малочетайский" потребкооперативсем пулăшаççĕ.

**– Сирĕн тăрăхра кашни ĕçе тивĕçлĕ хак парасси тĕп вырăнта...**

– Уй-хирти ĕçе вĕçлесен çĕр тата ферма ĕçченĕсене чысласси çирĕп йăлана кĕчĕ. Агропромышленноç ĕçченĕсен сатурлăхĕ савăнтарать. Ял хуçалăх продукчĕсене тирпейлекен предприятисем кăтартуллă ĕçлеççĕ. Сăмахран, "Ядринмолоко" АУО тата аш-какай комбинатĕнче ĕçлекенсем хисепе тивĕç. Вĕсен хастарлăхĕ район бюджетне ÿстерме май парать. Ырми-канми вăй хуракансене, пуçарулăхпа хастарлăх кăтартакансене, тăван çĕре чунчĕререн юратакансене Хисеп хучĕсемпе, парнесемпе чыслатпăр. Вĕсем ыттисене ырă тĕслĕх кăтартаççĕ.

**– Çул тăвас, çурт-йĕр çĕклес ыйтусене мĕнле татса паратăр?**

– Ку енĕпе те кăтартусем начар мар. Кăçал ялсене автоçулпа çыхăнтармалли программăна пурнăçларăмăр. Чÿк уйăхĕн 4-мĕшĕнче Эмеккассипе Липовка ялĕсем патне юлашки çухрăмсем хыврăмăр. Халĕ кашни ял патне такăр çул çитет. 2006-2008 çулсенче районта 37,553 çухрăм çул хута кайрĕ. Кăçал çĕнĕрен 6,4 çухрăм тунă. 11,812 çухрăма реконструкциленĕ. Етĕрне хули тавра çул тăвасси малалла пырать.

"Пурăнмалли çурт-йĕр" наци программи те районта ăнăçлă пурнăçланать. Етĕрне хулинче кăçал нумай хваттерлĕ вичĕ çурта çĕрĕшнĕ çуртсенчи çынсем пурăнма куçрĕç. Уйрăм кил-çурт çавăрас текенсемшĕн те кăçалхи çул ăнăçлă килчĕ: 21710 тăваткал метр хута кайрĕ. Çамрăк çемьесемпе тăлăх ачасене пурăнмалли çуртпа тивĕçтерессипе те тăрăшрăмăр. 6 тăлăх ача хăтлă çуртсенче пурăнма тытăнчĕ.

Республикăри "Ялсен 2012 çулччenхи социаллă аталанăвĕ" тĕллевлĕ программăпа килĕшÿллĕн Ирçери культурăпа социаллă объектсене юсаса çĕнетме 2 миллион та 900 пин тенкĕ, ял хушшипе асфальт çул тума 4 миллион тенкĕ ытла уйăрнă. Ку – ялсен çутă малашлăхĕн ырă палли.

Кăçал Етĕрне хулин мăнаçлăхне çĕклекен пĕлтерĕшлĕ тепĕр объект – физкультурăпа спорт комплексĕ – уçăлчĕ. Çак кермене тума 127 миллион тенкĕ хывнă. Вăл районта пурăнакансен юратнă вырăнĕ пуласса шанас килет.

Палăртнă тĕллевсене пурнăçа кĕртрĕмĕр. Анчах умра – татах та пысăкраххисем, вĕсене пурнăçласси хамăртан килет. Мĕнле ĕçлетпĕр – çапла пурăнатпăр. Халăхăн пурнăç шайĕ ÿссе пыни тăрăшарах ĕçлеме хистет.

**Юлия МАРЕЕВА**

● *Самана таппи*

# Маттур йыш

Выльăх чирĕ хăвăрт сарăлать пулин те пысăк хăрушлăх кÿрекен кайăк грипĕпе сысна чуми, çĕпĕр язви е бруцеллезпа туберкулез Канаш тăрăхĕнче чылай çултанпа тĕл пулман. Куншăн савăнмалла çеç. Анчах ÿсĕм хăй хальлĕн пулмасть: чылай тăрăшмалла, вăй хумалла. Тĕллев патне ветеринари службин палăртнă мероприятисене туллин пурнăçланипе, сыхланмалли меслетсемпе анлăн усă курнипе кăна çитетĕн. Канаш районĕнчи выльăх-чĕрлĕх чирĕпе кĕрешекен станци специалисчĕсем çакна аван ăнланаççĕ, хăйсен ĕçĕнче ăна тĕпе хураççĕ.

Коллектива А.И.Степанов ертсе пырать. Ушкăнра аслă пĕлÿллĕ 29 ветеринари тухтăрĕ тата 19 фельдшер – нумай çул тÿрĕ кăмăлпа вăй хуракан опытлă специалистсем.

– Кашни çулах ятарлă план хатĕрлетпĕр. Унпа килĕшÿллĕн хăш выльăха хăçан тата мĕнле чиртен укол тумалли, эмел памалли тата ытти йĕркене çирĕп пăхăнатпăр. Пирĕншĕн профилактика ĕçĕ те, чир-чĕр сăлтавне тĕпчесси те пысăк пĕлтерĕшлĕ, – тет Анатолий Иванович.

Район территорийĕнче – сиплевĕн 2 тата ветеринарин 13 участокĕ. Палăртнă тĕллевсене туллин тата вăхăтра пурнăçлама тăрăшса унти специалистсем кашни ялах çитеççĕ. Пĕр выльăх та сиплев пулăшăвĕсĕр юлмасть. Ветеринарин пур пунктĕнче те хăйсен тивĕçне тÿрĕ кăмăлпа пурнăçлакан, тăрăшса ĕçлекенсем. Чылай ветврачăн стажĕ 25 çултан иртнĕ. Йышра çамрăксем те пур.

Анатолий Иванович коллективпа кăмăллă. "Хăшĕн хастарлăхне уйрăммăн палăртнă пулăттăр?" – "Пурте ĕçчен те маттур", – терĕ. Чăнах та çапла. Тăрăшса ĕçлекен ушкăнпа кăна ăнăçу тума пулать.

Районти тĕрлĕ харпăрлăхра пурĕ – 14745 ĕне выльăх, 9304 пуç сысна. Ытти выльăх-чĕрлĕх те сахал мар. Ветеринари тухтăрĕсем кашни сывă пултăр тесе тăрăшаççĕ. Выльăх-чĕрлĕх сывлăхне вăхăтра тĕрĕслесе тăрсан ун çумне мĕнле амак çыпăçтăр?

Ветеринари службин профилактика ĕçĕ – чи пĕлтерĕшли. Çулталăкра ĕнесене – 12, сыснасене – 7, качака-сурăха – 8, чăх-чĕпе 8 тĕрлĕ чиртен, лашасемпе йытăсене те тĕрĕслеççĕ. Вакцинăпа укол тусан выльăх-чĕрлĕхĕн иммунитет шайĕ мĕнлерех ÿснине палăртаççĕ. Вун икĕ уйăхра профилактика йышĕ вăтăртан та иртет.



● *Ветстанци пуçлăхĕ А.И.Степанов.*

Уйрăм çын хуçалăхĕсене ветеринари пулăшăвĕ кÿрессине те анлăлатаççĕ. "АПК аталанăвĕ" программăна пурнăçланă май тата ĕçе çăмăллатас тĕллевпе ветстанцин виçĕ участокĕнче ĕнесемпе пушмак пăрусене искусствăлла майпа пĕтĕлентерессине йĕркеленĕ. Ăна тата икĕ çĕрте уçасшăн.

"Пĕр выльăх та чир-чĕртен тĕрĕсленмесĕр, прививка тумасăр ан юлтăр, ялан сывă пултăр", – теççĕ Канашри ветстанци специалисчĕсем.

**Михаил ИВАНОВ**

● *Пĕлтерÿ*

**РФ "Раççей Федерацийĕнчи судьясен статусĕ çинчен" Саккунĕн 5 статйипе килĕшÿллĕн Чăваш Республикин судьясен квалификаци коллегийĕ вакантлă çак должноçсем уçăлни çинчен пĕлтерет:**

**– Чăваш Республикин Элĕк район сучĕн судйин;**

**– Чăваш Республикин Канаш район сучĕн судйин;**

**– Чăваш Республикин Хĕрлĕ Чутай район сучĕн судйин;**

**– Шупашкар хулин Калинин районĕн 6-мĕш суд участокĕн миравай судйин;**

**– Шупашкар хулин Ленин районĕн 1-мĕш суд участокĕн миравай судйин;**

**– Шупашкар хулин Мускав районĕн 6-мĕш суд участокĕн миравай судйин.**

**РФ "Раççей Федерацийĕнчи судьясен статусĕ çинчен" Саккунĕн 5 статйин 6 пунктĕнче палăртнă тивĕçлĕ документсемпе ыйтусене 2009 çулхи 2010 çулхи кăрлачăн 21-мĕшĕччен ĕç кунĕсенче 8 сехетрен пуçласа 12 сехетчен тата 13 сехетрен пуçласа 17 сехетчен, 2010 çулхи кăрлачăн 21-мĕшĕнче 18 сехетчен çак адреспа йышăнаççĕ: Шупашкар хули, Байдуков урамĕ, 23 çурт, 432 пÿлĕм.**

**Конкурса хутшăнакансен ыйтăвĕсене ăçта тата хăçан пăхса тухнине палăртнă йĕркепе пĕлтерĕççĕ.**

# "АККОНД" продукцине сумлă наградăсемпе чысланă




**Юлашки уйăхра кăна "АККОНД" кондитер фабрикин продукцийĕ харăсах темиçе сумлă награда илчĕ. Чÿк уйăхĕн вĕçĕнче унăн "Птица дивная" канфечĕ тата кăпăшка "Интрига" десерчĕ "Чи лайăххине – ачасене" пахалăх паллине тивĕçрĕç. Нумаях пулмасть вара "АККОНД" çимĕçĕн пахалăхне 2009 çулхи "Раççейĕн чи лайăх 100 таварĕ" программăра палăртнă.**

Реклама




"АККОНД" кондитер фабрики "Раççейĕн чи лайăх 100 таварĕ" программăна 10 çул хутшăнать. Кăçал сумлă наградăсене илме "тофи" ярăмри çĕнĕ çимĕçсене тăратнă. Эксперт комиссийĕ "ЗАЧАРОВАННЫЕ", "ЗАБАВНЫЕ" тата "НАСТЕНА-СЛАСТЕНА" канфетсен пахалăхне пысăка хурса хакланă, вĕсене "ÇУЛТАЛĂК ÇĔНĔЛĔХĔ" номинацире палăртнă. "Настена-Сластена" канфет: бейлиз, тирамису хамăр çĕршыв продукцийĕн пахалăхне тивĕçтерес ĕçри çитĕнÿсемшĕн "Раççейĕн чи лайăх 100 таварĕ" программа дипломанчĕ пулса тăнă. "АККОНД" АУО вара пахалăх декларацине алă пуснă, унпа килĕшÿллĕн кондитер фабрики хăйĕн ирĕкĕпе пахалăхăн çирĕп кăтартăвĕсене тивĕçтерессипе, "Настена-Сластена" канфетăн пысăк пахалăх шайне малашне те тытса пырассипе çыхăннă обязательствăсене хăйĕн çине илнĕ.

"АККОНД" кондитер фабрикин продукцийĕ Раççейĕн тĕрĕслевсемпе сертификаци центрĕн конкурсĕсен лауреачĕн тата çĕнтерÿçин ячĕсене пĕр хут кăна мар çĕнсе илнĕ. Çĕнĕ "тофи" ярăма ют çĕршывран кÿнĕ çĕнĕ йышши оборудованипе, хăйне евĕрлĕ рецептурăпа тата "АККОНД" кондитер фабрики кăларакан ытти тавар пекех пахалăхăн тĕнчери ISO:HASSP стандартне пăхăнса хатĕрленĕ. Тĕнче шайĕнчи инноваци проекчĕсене ĕçе кĕртни тата пахалăхăн чи çирĕп стандарчĕсене пăхăнни сумлă кăтартусем кÿрет.

Кăшт маларах вара Мускаври Общество палатин конференцзалĕнче "Чи лайăххине – ачасене" пахалăх паллине савăнăçлă лару-тăрура панăччĕ. Çак программăна хутшăнни – Шупашкар кондитерĕсен дебючĕ, çавна май "Чи лайăххине – ачасене" пахалăх паллине тивĕçни предприятишĕн уйрăмах хаклă тата пысăк пĕлтерĕшлĕ. "РОСТЕСТ–Мускав" ФПУ никĕсĕ çинче йĕркеленĕ эксперт комиссийĕ "Птица дивная" канфета тата кăпăшка "Интрига" десерта тивĕçлипе хакласа ачасем валли кăларакан продукцин пысăк сумне хакламалли пахалăх паллипе чысланă. Пылак çимĕçсене ачасем уйрăмах юратаççĕ-çке.

"АККОНД" кондитер фабрикин пахалăх пайĕ продукци пахалăхне производствăн мĕн пур сыпăкĕнче çирĕп тĕрĕслесе тăрать: чĕр тавар, материалсем тата чĕркемсем кÿрсе килнинчен пуçласа хатĕр кондитер изделийĕсене потребитель патне илсе çитериччен.

"АККОНД" АУОра производствăна Пĕтĕм тĕнчери стандартизаци енĕпе ĕçлекен организаци предписанийĕсем çинче никĕсленĕ, продукцие вара фабрикăшăн çеç кăтартуллă рецептурăпа пĕрле Шупашкар кондитерĕсен чун ăшшин пĕр пайне хывнă. Çавăнпа "АККОНДăн" пылак продукцине потребительсем юратаççĕ – Раççейре те, чикĕ леш енче те.

# «Хыпар» хаçат парнисемшĕн кире пуканĕ йăтассипе раштав уйăхĕн 5-6-мĕшĕсенче иртнĕ турнир саманчĕсем















Г.ВЕРБЛЮДОВПА С.ЕРМАКОВА сăн ÿкерчĕкĕсем

**Кире пуканĕ йăтассипе Пĕтĕм Раççейри XXVI турнира йĕркелесе ирттерме пулăшнăшăн "Хыпар" хаçат редакцийĕ ăмăртусен тĕп судйине В.И.Ласточкина тата унăн çумĕсене Б.Н.Глинкинпа П.П.Сидорова, З.П.Иванов тĕп секретаре, помост судйисене, Чăваш патшалăх ял хуçалăх академийĕн ректорне Н.К.Кириллова, А.В.Шилов проректора, физкультура кафедрин доцентне А.А.Алексеева, турнирăн пархатарлă спонсорĕсене – Раççей Перекет банкĕн Чăваш уйрăмĕн управляющине В.Н.Александрова, Вăрнарти аш-какай комбиначĕн генеральнăй директорне Ю.А.Попова, "Россельхозбанкăн" Чăваш Енри филиалĕн ертÿçине И.Н.Письменскаяна, «Росгосстрахăн» Чăваш Республикинчи филиалĕн директорне А.Г.Пирожкова, Чăвашпотребсоюз правленийĕн председательне В.М.Павлова, «ТАВ» суту-илÿ компани ертÿçине И.М.Антонова,ЧР Патшалăх Канашĕн депутатне В.В.Свешникова, Комсомольски районĕнчи «Çĕр улмине мухтав» çĕр ĕç фирмин ертÿçисене Х.С.Идиатуллинпа А.П.Капитонова, «Водстроймонтаж» ООО директорне В.А.Марушева, «Рыболов» ООО директорне А.П.Портнова тав тăватпăр.**

● *Ят-сум*

Реклама

# Пучахĕсем ылтăн, çурчĕсем хăтлă

**Комсомольски районĕнчи "Золотой колос" хресчен-фермер хуçалăхĕн тырă пучахĕсене кăçал чăннипех ылтăн тейĕн: гектартан вăтамран 32 центнер.**

Тăвата çул каялла йĕркеленĕ фермер хуçалăхне Фанис Рахимзянов ертсе пырать. Фанис Раилович Комсомольски районĕнчи Урмаелĕнче çуралса ÿснĕ. Маларах Шупашкарта пĕр предприятире инженерта, "Дуслык" строительство фирминче вăй хунă.

1999 çулта Комсомольски салинче Рамиль Рахматуллинпа "Стройсервис" акционерсен хупă обществине йĕркеленĕ. Асăннă предприяти Кĕтне тăрăхĕнче пурăнакансене паянхи кунччене хăйĕн ĕçĕ-хĕлĕпе савăнтарать.

"Золотой колос" фермер хуçалăхĕн офисĕ Комсомольски салинчи Промышленноç урамĕнчи 2-мĕш çуртра вырнаçнă.

– Маларах "Север" ял хуçалăх кооперативĕ вырнаçнă территорире пирĕн çĕрсем. Вĕсене уйрăм предпринимательсенчен тара илетпĕр. Çĕр лаптăкĕ 450 гектар. Урпа, сĕлĕ акатпăр. "Иккĕмĕш çăкăра" 50 гектар лартнăччĕ. Çĕр улмин "Розара", "Удача" сорчĕсене ытларах кăмăллатпăр. Шел, кăçал унăн тухăçĕ сахалрах пулчĕ. 109 гектар кĕрхи тулă акса хăвартăмăр, – каласа парать Фанис Рахимзянов.

Тыр-пул, пахча çимĕç ÿстернисĕр пуçне выльăх-чĕрлĕх те тытаççĕ. Ферма Çĕнĕ Александровка ялĕнче вырнаçнă. Унта мăйракаллă шултра выльăх – 50 пуç, вăл шутра сăвакан 6 ĕне, 100 сурăх, 10 лаша.

– Эпир виçĕ çул тыр-пул, пахча çимĕç çитĕнтерне, фермăсене юсанă. Выльăх кăçал тин усрама тытăнтăмăр. Фермер хуçалăхĕнче пурĕ 25 çын. Вĕсенчен ытларахăшĕ – Урмаелтен. Шалăва вăхăтра паратпăр. Ĕçе ăнтарас тесен ял хуçалăх техникине çĕнетсех тăмалла. Нумаях пулмасть çĕнĕ виçĕ трактор туянтăмăр, – паллаштарать ертÿçĕ.

**– Мĕнлерех аталанать паян "Стройсервис"?**

– Предприятире килĕшÿпе 20 çын ĕçлет. Тĕрлĕ наци çыннине /вырăса, тутара, ирçене, чăваша/ туслăх пĕрлештерет. Мĕн пур юсав ĕçне пурнăçлатпăр. Çул-йĕре те тирпейлетпĕр. Комсомольски тăрăхĕнче кăна мар, Патăрьел районне, Тутарстана кайса ĕçлетпĕр. Шкулсемпе ача сачĕсене, культура "çурчĕсене", больницăсене юсаса çĕнететпĕр.

Нумаях пулмасть Комсомольски салинчи пурăнмалли виçĕ çурта хăтлас ĕçе вĕçлерĕмĕр. Халĕ Нĕркеç ялĕнчи шкула, çемье врачĕн офисне юсатпăр. Хоккей кăшкарне вырнаçтаратпăр.

**– Апла эсир строительствăпа çыхăннă тĕрлĕ ĕç пурнăçлатăр?**

– Çапла. Ăшă, шыв кĕртетпĕр, ванна, душ пÿлĕмĕсене йĕркелетпĕр.

**– Сирĕн ĕç-хĕл тĕрлĕ енлĕ. Епле ĕлкĕретĕр?**

– Самана çивĕч, йăрă пулма хистет. Çамрăк чухне ытларах ĕçлемелле. Мĕн ачаран çĕр çинче тăрмашнă. Аттепе анне те ĕмĕрĕпех "Алга" колхозра вăй хунă. Çĕре пушă вырттарни çылăх пек туйăнать.

**– Паянхи кун мĕн пăшăрхантарать сире?**

– Çамрăксем яла юлманни, çĕр ĕçĕнчен писни. Ял хуçалăх специалисчĕсене, механизаторсене тупма йывăр. Хĕрсем фермăна каясшăн мар. Пурте хулана туртăнаççĕ, аслă пĕлÿ илесшĕн. Тепĕр 10 çултан ялта суха тăвакан, тыр-пул ÿстерекен пулĕ-ши?

**– Лару-тăрăва улăштарма мĕн тумалла?**

– Патшалăхăн ял хуçалăхне аталантарма укçа-тенкĕ ытларах уйăрмалла, тыр-пул, пахча çимĕç хакĕсене йĕркелесе тăмалла. Лайăх ĕçшĕн тивĕçлĕ тÿлев пултăр.

**Роза ВЛАСОВА**